15-мӗш ҫул тухать.

# КАПКӐН

№ 14. СЕНТЯБРЬ
1939 ҫул

„Чӑваш Коммунӗ"
хаҫат кӑларать




— Эх, епле тепӗр вунсакӑр ҫул тӳсем!
— Ма пит хыпаланан?
— Ун чухне эпӗ те хамӑн ывӑла Хӗрлӗ Ҫара ҫакӑн пек ӑсататтӑм.

# ПРОХОР ÇЕМЙИ

Паян Прохор хваттерне кӗрсен темиçе хутчен калле-малле утса çӳрерӗ. Сӑнӗ пӗтӗмпех улшӑннӑ, савӑнӑç паларать пичӗ çинче. Тутисем кулкалаççӗ. Куçӗсем чеен пӑхаççӗ. Кӑмӑлӗ уçӑ.

— Старик, эсӗ ӗçрен таврӑннӑ май, „американкӑна“ кӗрсе тухрӑн-им? Ытла урусем çӑмӑл пускалаççӗ. Тутусем кулаççӗ,—терӗ арӑмӗ, Прохор куçӗнчен пӑхса.

Прохор тепӗр хут пӳлӗм тавра хӑвӑрт утса çаврӑнчӗ. Унтан тенкел çине таянса ларчӗ.

— Эсӗ вӗт нимӗн те пӗлместӗн. Эпӗ паян иккӗмӗш хут çамрӑклантӑм. Ӑнлантӑн-и?—терӗ вӑл арӑмӗ çине пӑхса.

Арӑмӗ тӗлӗнсех кайрӗ. Куçӗсене мӑч-мӑч хупса пӑхать.

— Эсӗ ара, çав, леш, ватӑ çынсене çамрӑклатакан профессор патӗнче пултӑн-им?—терӗ кӑмӑллӑн кулса.—Апла эсӗ мана пӑрахса çамрӑк арӑм туянас тейӗн?

— Ха-ха-ха! Ав, мӗн шухӑшлатӑн эсӗ. Виличчен пӗрлех пурӑнса иртterер ӗнтӗ ӗмӗрсене. Пӗлетӗн-и—эпӗ те çар çыннисен хисепӗнче тӑма тивӗç илтӗм. Ӑнлантӑн-и?

— Кирлӗ мара ан калаçса лар-ха,—терӗ арӑмӗ. Аллӑ çула çитетӗн те, юри çеç суйса каланӑ пуль сана çамрӑксем, хӑвӑнтан куласшӑн.

Прохор арӑмне ӗнентересшӗн кӗсйинчи хаçата кӑларса кӑтартрӗ.

— Çамрӑксем манран кулмашкӑн, эпӗ вӗт кулӑшла çын мар, çур ӗмӗрӗме вӑрçӑра ирттернӗ çын. Акӑ кунта пурне те тивӗç çар обязанноçӗ çинчен кӑларнӑ закона пичетлесе кӑларнӑ. Çав закон тӑрӑх манӑн та çар учочӗнче тӑмалла. Пӗрремӗш категорири 3-мӗш разрядра тӑракан запас пулатӑп эпӗ...

Арӑмӗ тинех ӗненчӗ. Тутисене йӑл култарчӗ:

— Апла ывӑлӑрпа иксӗр те çар çыннисем пулса тӑтӑр ӗнтӗ...

— Коля военный пулайман-ха. Вӑл мединститутра çеç вӗренет.

—Çамрӑк мар çав ӗнтӗ. Ме, вуласа пӗл, акӑ çыру янӑ. Халӗ ӗнтӗ вӑл мединститутра мар, военно-медицински академине вӗренме куçнӑ,—терӗ арӑмӗ, ывӑлин çыруне парса.

Прохор ывӑлин çыруне темиçе хутчен вуласа пӑхрӗ. Хӑй куçӗсене хӑй ӗненмест. Çук, суя мар, чӑн. Маттур Коля! Военный врач пулать,—хӑй тӗллӗн каласса ларать Прохор.

Прохор савӑннипе арӑмӗ те савӑнӑçлӑ çӗнӗ çын пек йӑпӑр-япӑр пускаласа сӗтел çине апат хатӗрлет. Упӑшки çине ӑшӑ куçӗпе пӑхать.

— Ларса апатлан ӗнтӗ. Хырӑму выçнӑ пуль,—тесе сӗнет.

Старикпе карчӑкӗ çапла каласса ларнӑ тӗле хӗрӗ пырса кӗчӗ.

— Атте, анне! Эпӗ учлет шкулне вӗренме кӗтӗм. Мӗн калӑр?—тесе пӗлтерчӗ.

Карчӑкпа старик пӗр-пӗрин куçӗсенчен пӑхса илчӗç.

— Мӗн калас, хӗрӗм... Аван, — терӗ Прохор, хӗрне мухтаса.

— Çемьере пурсӑр та çар çыннисем пулса тӑтӑр ӗнтӗ. Пӗр эпӗ çеç юлтӑм. Манӑн та „Хӗрлӗ хӗрес“ курсне вӗренме кӗме заявлени парас пулать. Илӗç-ши? Ватӑ темӗç-ши?—терӗ амӑшӗ.

— Çырса пар! Илӗç. Вӗрен! Ӑнсӑртран вӑрçӑ пуçлансан, санӑн та уссу пулӗ. Пӗтӗм çемйипе çар çыннисем пулар,—терӗ Прохор арӑмне хушса.—Паянах çырса леçсе пар!

Çапла Прохор çемйинчи çынсем пурте вӑрçӑ ӗçне хатӗрленсе тӑраççӗ. Вӑл çемьере боец, военный врач, летчица, сестра... Вӗсем пӗтӗм çемйипе çӗр çинче те, сывлӑшра та, урса çитнӗ тӑшмана çапса çӗмӗрме хатӗр.

**М. Данилов—Чалдун.**

## Савӑннипе

Етӗрнере çу çапакан завод пур. Унти шут ӗçӗсене Семенов, Сбруев т. ыт. юлташсем туса пыраççӗ. Вӗсене завод дирекцийӗ кӑтартнӑ вӑхӑтран кӑшт ытларах ӗçленӗшӗн укçа çырса паман. Ку ыйтӑва судӑн татса памалла пулнӑ.

Августӑн 3-мӗшӗнче суд пулать. Кӑнтӑрла иртсен пӗр сехет те 30 минутра Семеновпа Сбруев судран тухаççӗ те тӳрех занятине.. О, çу-ук, занятине кайман вӗсем.

Ырӑ ӗçрӗмӗр,  
Ырӑ çирӗмӗр,  
Намӑс-симӗс ниçта та курмарӑмӑр,—

тесе пикенсех юрласа ларнӑ вӗсем, пивноя кайнӑ та. Темшӗн савӑннӑ, темшӗн хӗпӗртенӗ, хӑйсем бутылкӑсем кутӗнче прогул туса ларнине сисмен те.

Хӑйсем сисмен, дирекци сисни-сисменни—пире паллӑ мар. Анчах çав прогульщиксем хӑйсем халиччен „ниçта курман намӑс-симӗсе“ курма тивӗçех ӗнтӗ.

**М. Е.**

## ЮРӐ

Советски районти Хучаш колхозӗ 2—3 çултанпах сад чӗртет. Садне карта тытман. Çавӑнпа та иртен-çӳрен качакасемпе сурӑхсем сада кӗрсе улма йывӑççисене тутанса пӑхаççӗ. Халь ӗнтӗ колхоз председателӗ йӑлт хуйха ернӗ. Пуçӗ кӑшт хӗрсенех, вӑл çакӑн пек юрра салхуллӑн тӑсса ярать:

„Каччан-каччан качаки  
Каçман карта хӑвармарӗ,  
Пирӗн колхоз садне те  
Кӗмесӗрех юлмарӗ.

Пахчи-пачхи панулми,  
Чи тӑрринче сар улми—  
Татса çисе пулмарӗ,  
Качака—мур кӑшларӗ“.

**М. Шуçӑм.**

# АСА ИЛСЕН

Пракка Киркалов физкультурник—спортсмен мар, унӑн кӑкӑрӗ ҫине халиччен значок ҫакӑнса курман, анчах чунӗпе, шухӑш ӗмӗчӗпе вӑл мӗн тери ӑмӑртусене хутшӑнса курман-ши! Стадионсем, площадкӑсем ҫинче, шыв станцисенче пулса иртекен ӑмӑртусене, кроссене курма чӑн малтан Пракка Киркалов ҫитсе ларать. Пракка вара хӑй спортсмен пулманшӑн, спорт ӗҫне таксҫанах тытӑнманшӑн хӑйне хӑй ятлама тытӑнать, ҫав кунах хӑнӑху тума пуҫӑнма ҫирӗп ӗмӗт пырать. Анчах Пракка пуҫӗнчи шухӑшсем ытла та ҫӑмӑл мӗн, хӑйӗнчен ыйтмасӑрах ӑҫталла каяс тенӗ, ҫавӑнталла тухса каяҫҫӗ.

Нациллӗ 9 республикӑсен спартакиадин пӗр ӑмӑртӑвне те курмасӑр хӑвармарӗ вӑл, кашни выступленине чӗререн хумханса пӑхать. Ун чухне вара Киркалов пуҫӗнчи шухӑшсем пин ҫынлӑ кросри пекех вылянма пикенеҫҫӗ: пӗри велосипедпа ҫил пек вӗҫсе каять, пӗри урхамах пек ҫуран чупать, теприсем шывра ишеҫҫӗ, пӗри диск ывӑтать, тепри хӑлат пек чупса пырса сикет тата ыттисем те. Пракка чӗкеҫ пек вылякан шухӑшсене пуҫтарса ҫитерме те ӗлкӗреймест. Пӗр чухне вӑл, хӗвел ҫинче ӑшӑнса выртакан кушак пек, таянать те, вара пуҫне ҫав тери тутлӑ шухӑшсем пырса кӗреҫҫӗ, тӗтреленнӗ куҫӗсемпе хӑйне хӑй курать: вӑл велосипедистсен ӑмӑртӑвӗнче... ыттисене ҫур километр ытла кая хӑварнӑ пек, урисем ыткӑнса ҫеҫ ҫаварнаҫҫӗ, кӑкӑрӗ вӗркӗч пекех, хашлатса ҫеҫ пырать...

Киркалов сисмен те, урисем хӑйсене хӑйсемех, хуҫинчен ыйтмасӑрах ҫаварнаҫҫӗ, хулӗсем руль тытнӑ пек тӑнк хытса тӑраҫҫӗ. „Ҫын сисмерӗ пулсан тем пекехчӗ“ тесе, тирпейленсе ларчӗ. Анчах, мур илесшӗ, шухӑшсем каллех пуҫра сиккипе ыткӑнаҫҫӗ: ... Киркалов финиш патне чӑн малтан ҫитет... Ун патне куракансем, судьясем, спортсменсем пыраҫҫӗ те, хупӑрласа илеҫҫӗ... „Шель, шель халиччен паллашман эпир“, тет Знаменский. „Здравствуй, Киркалов, малашне эпир пӗлӗшсем пулӑпӑр“! тет тутарсен паллӑ велосипедистки Половникова Наташа. Киркаловӑн тути хӗррисем ҫӳлелле ҫӗкленеҫҫӗ, чӗри чутех ирӗлсе каймасть.

—Фу,—тет Пракка тӑна кӗрсе.—Кун пек мар, халех физкультурӑна пуҫӑнатӑп, ҫитес ӑмӑртура эпӗ мала тухмалла,—хыттӑнах шутларӗ вӑл.

Тата темиҫе кунтан Пракка майкӑ, трусы, тапочкӑсем туянчӗ. Кӑкӑрне, хулӗсене шӑла-шӑла илет. Хӑй велосипед ҫине лариччен шухӑшӗсем аллӑ километра кайса килеҫҫӗ.

Ыран канмалли кун тенӗ каҫ Киркалов Етӗрне тракчӗ ҫине велосипедпа ҫитрӗ. Я-ар, я-ар! пырать ҫул тӑрӑх. „Малтанлӑха майӗпен, унтан темп ҫине темп“, теҫҫӗ пуҫри шухӑшсем. —Мӗнех вара, лар та кай, урупа педальсене пусма ҫеҫ ан ӳркен, —тет пӗр шухӑшӗ. Куҫсем темӗн чухлӗ халӑха кура пуҫларӗҫ. „Нажимай, нажимай!“—кӑшкӑраҫҫӗ вӗсем. Пӗри сасартӑк: „напирай!“—тесе ҫухӑрчӗ, Киркалӑв чалт! сиксе илчӗ. Каялла ҫаврӑнса пӑхать те, икӗ пӗчӗк ача велосипедсемпе ӑна хуса ҫитнине курать. Вӗльт! иртсе кайрӗ пӗри мала, вӗльт! —иртрӗ тепри те. Пӗр ачи, урисем ҫитменнипе, пӗр енчен тепӗр енне сулӑнса, чалӑшса пырать. „Вот мӑшкӑл, сӑмса-меккейсене иртертӗм пулать“,—ҫилленсе кайрӗ Киркалов. Тытӑнчӗ педальсене „нажимай“ тума. Малалла ӳпӗнсе, шӑлне ҫыртса ҫавӑрма пикенчӗ, анчах леш ачисем аякран аякка каяҫҫӗ. „Ун пек пулма тивӗҫ мар“,—шухӑшлать вӑл; лешсем, юри йӗкӗлтенӗ пек, хытӑран хытӑ кайрӗҫ. Виҫҫӗмӗш километрта Киркаловӑн урисем итлеми пулчӗҫ, пӗрре пусрӗ, тепре пусрӗ, виҫҫӗмӗшӗнче—велосипед чалӑшса кайнипе, чутах шӑтӑка кӗрсе ӳкетчӗ. Малти ачасем вӑрмана кӗрсе кайрӗҫ.

—Велосипедист пулас мар, мӗне кирлӗ шӑм-шака ҫӗмӗрме,—шутларӗ Киркалов. Ултӑ километра кайса килнӗ хыҫҫӑн, велосипед унӑн куҫне темӗнле асаплӑ япала пек курӑнма пуҫларӗ.

Киркалов шывра ишекен спортсмен пулас шухӑш ҫине тӑчӗ. Каланӑ,—тунӑ. Атӑл хӗрри тӑрӑх вӑл чылайччен тарӑн шухӑша ерсе ҫӳрерӗ. Унтан инҫех те мар икӗ ҫамрӑк хӗрача шыва кӗме хатӗрленеҫҫӗ. Иртнӗ ҫултанпа шыва кӗрсе курманскерӗн, чӗркуҫҫи таран кӗрсенех ҫан-ҫурӑмӗ электричество токӗ янӑ пек сӑрлатса илчӗ. Майӗпен ишсе пырать вӑл. „Малтанлӑха майӗпен, унтан темп ҫине темп“, теҫҫӗ пуҫри шухӑшсем. „Напирай, нажимай!“ теме пуҫларӗҫ теприсем. Канлӗ ҫеҫ ишсе пыратчӗ Пракка. Анчах инкек кунта та ун хыҫҫӑнах ҫӳрет мӗн. Ҫыран хӗрринчи ҫамрӑк хӗрачасем шыва кӗнӗ те, Киркалов патӗнченех иртсе кайрӗҫ. „Атя пӗрле, юлташ!“—тесе кӑшкӑрать пӗри. Тепри тата систермесӗр ишсе пырса, Праккан пуҫне шыв айнелле тӗксе хӑварчӗ. „Лӑнкӑрт“ турӗ Киркаловӑн пыр шӑтӑкӗ. „Нажимай“ текен шухӑшсем таҫта Атӑл леш айккинех кайса ларнӑ пулас, нимӗн те чӗнмеҫҫӗ, вӗсен вырӑнне „часрах тух!“ текен шухӑшсем персе ҫитрӗҫ. Праккан ӳт-пӗвӗ хӑйӗнчен ыйтмасӑрах ҫыран еннелле ҫаврӑнчӗ, урисем ҫӗр шыраҫҫӗ. Темӗн тӗрлӗ ҫапкаланнӑ хыҫҫӑн, вӑл ҫыран хӗрне тухса ӳкрӗ.

—Спорт пулать-и шывра ишесси, ӑнсӑртран тем курса тӑма пулать: шыв тӗпне анса выртсан, питех спорт тӑвайман,—терӗ вӑл. Шывӗ те тарӑн, ура ҫитмест. Ҫуран чупма вӗренвинчен ырри пулас ҫук, чуп та чуп, пырса та ҫапӑнмастӑн, шывра та путмастӑн,—тесе шухӑшларӗ.

Пракка шухӑшлать те тытӑнать, анчах ӑна инкек-синкексем вӑл ӑҫта ҫитнӗ, унта кӗтсе тӑраҫҫӗ мӗн. Етӗрне тракчӗ тӑрӑх мӗнпур чун-хавалӗпе чупса пынӑ чух вӑл ҫул урлӑ каҫакан качака ҫине такӑнса ӳксе, чӗркуҫҫине шӑйӑрса янӑ.

—Пирӗн кунта спортпа ерҫмелли вырӑн та ҫук,—терӗ вӑл ҫул ҫине лачлаттарса сурса.—Хӗллечен кӗтетӗп те, йӗлтӗрпе ҫӳреме тытӑнатӑп,—тесе шутларӗ.

Шанмалла-и, ҫук-и Киркалова, анчах унӑн хӗллехи сезонӗ те инкек-синкекпе иртессине малтанах каласа хума пулать.

Калав ӑнланмалларах пултӑр тесен, Киркалов вырӑнне хӑш-пӗр профсоюз организацисене илме пулать. Вӗсем те, Пракка пекех, пӗрре аса илсен харӑссӑн ҫанӑсене тавӑраҫҫӗ, унтан е сӑлтавсем ҫине пенине, е тепӗр сезона хӑварнине илтме пулать.

**Никита Волков.**

# Сарă сăмавар

Шавлать пасар. Темиçе тĕрлĕ сасса пĕр трубаран кăларнă пек, кĕр! кĕрлесе тăрать Юхма пасарĕ...

Кил-çуртра кирлĕ ăпăр-тапăрсене сутакан урамра пĕр хĕрарăма темиçе çын хупăрласа илнĕ.

— Çук, аплапа памастăп!—çуйăхать çав хĕрарăм.

— Ме çĕр тенкĕ!—сĕнсе парать пĕри.

— Çĕр вуннă!

— Ме çĕр те пиллĕк!

— Çĕр вуннă!

— Тепĕр тăваттăшне хушам эппин!

— Çĕр вуннă!—пĕр пусне те ўкмест хĕрарăм.

Мĕн хаклашаççĕ кусем? Петр Иванович çав ушкăн çывăхнерех пычĕ те çĕрвуннăлатса тăракан хĕрарăм умĕнче витре кĕрекен сарă сăмавар ларнине курчĕ. Пасара вăл, арăмĕн кăмăлне савса, „Çĕвĕ çĕлекен машина туянса пулмĕ-и-ха" тесе тухнă. Сăмавара курсан, ку шухăш унăн тăçта кайса çухалчĕ. „Куншăн арăм та савăнсах каять ĕнтĕ,—тесе шухăшларĕ вăл.—Килти шăтнăччĕ-ха, ăна юсаттариччен луччĕ кăна илес".

— Мĕн чул тăрать? — ыйтрĕ вăл хĕрарăмран, сăмаварне ниçтан ытараймасăр.

Хĕрарăм Петр Иванович çине, ăна трук палласа илнĕ çын пек, хăйĕн хĕсĕнсе кĕнĕ чăлтăркка куçĕсемпе пăхса илчĕ. Вара тути-çăварне шăлкаласа, унăн хăлхинчен темĕскер пăшăлтатрĕ.

„Илетĕнех пулсан, сана тăхăрвуннăçинчен парăп", тесе ăнланчĕ ăна Петр Иванович.

Кунта унăн та, хăйĕн черечĕпе, хĕрарăм çине тинкерсе пăхса илмелле пулчĕ. Кам-ши ку? Хамăр тăврашранах эп палламан „инке, аппа" марши? Мĕншĕн ыттисемшĕн çĕр вуннă та—маншăн тăхăрвуннă?

„Паракантан ил, çапакантан тар!" тенĕ чăвашсем. Петр Ивановичăн тарма сăлтавĕ çук: ăна никам та çапмасть, хăваламасть. Унăн укçа кăларасси çеç юлнă, мĕншĕн тесен ăна параççĕ. Вăл çавăн пек турĕ те. Вара, илнĕ таварне хăрах хăлхинчен çаклатса, пасарăн ытти урамĕсенче çўремесĕрех, килĕ еннеле утрĕ. Нумаях каймарĕ вăл, хыçалта: „Иван Петровчă! Иван Петровчă!" тенĕ сас илтĕнсен, унăн çаврăнса пăхмалла пулчĕ. Унта хай хĕрарăм йўле янă сăкманĕпе шапăлтатса пырать.

— Ытла васкаса утатăн, ниçтан çитме çук пĕтĕмпе,—терĕ вăл хăшăлтатса, ăна хăваласа çитсен.—Сан пата пĕр ĕç пур та манăн, килнех пырсан, çиленмĕр-ши?

— Ак тата, çын пынăшăн мĕн тума çиленес-ха, —терĕ Петр Иванович. Ытла трук пулнипе, вăл урăх ним калама пĕлмерĕ.—Айда, айда-а, хăна пулăн. Анчах кам...—терĕ те вăл, „пулатăн-ха эс?" тесе ĕлкĕреймерĕ, унпа юнашар вĕтĕртетсе пыракан хĕрарăм хăй калаçмаваскарĕ.

— Хăна пуласси-мĕнĕ-ĕ... ăна хамăрăн тумалла та-ха... Э-е, сăмаварĕ ку питĕ аван ĕнтĕ: юхмасть-тумасть, час вĕреме кĕрет. Çавăнпа эпĕ ăна санах парас терĕм. Атту, темĕнле çынна çакланатчĕ-ха вăл.

Петр Иванович пуçĕнчи шухăшсем пăтранма пуçларĕç. „Элле мана аташтарать ку хĕрарăм, е хăй аташса кайнă" тесе, мĕнпур шухăшсене пĕр çулпа яма тăрăшса пычĕ вăл. Ăна, пуринчен ытла, хăйне „Иван Петровчă" тесе чĕнни тĕлĕнтерсе ячĕ.

— Ва-ара, аван пулчĕ-ха ку,—тет малалла хĕрарăм.—Сана тахçанах шыранăччĕ-ха.

— Инке,—терĕ çаканта Петр Иванович, аран-аран пĕр сăмах кўртсе лартма май тупрĕ. Анчах, пĕр тапранса кайнă хĕрарăм ниçтан чарăнаймасть, колхоз инкубаторĕнчи мĕн пур чăх-чĕпсене пĕр çĕре пуçтарса килсен те вăл кăларса тăракан сăмахсем чухлĕ пĕрчĕ ниепле те сăхса ĕлкĕрес çук вĕсем. Мĕнле чарас кăна?

— Эх, пăрăн, пăрăн! Лаша килет!—терĕ вăл. Ытлаванах çул варрипе пыракан хĕрарăм айăккине чупса тухрĕ. Пăхать çаврăнса, çав тĕрлĕ ĕрĕхтерсе килекен нимле лаша та çук. Петр Иванович йăл! кулса илчĕ.

— Инке,—терĕ вăл татах хăй çине улталаннă çыннăн куçĕсемпе пăхакан хĕрарăма.—Калама аван та мар та: эпĕ сана, темле, паллаймарăм-ха.

— И-ий ара-а, ăçтан пурне те палласа пĕтерен, сахал-и пирĕн пеккисем сире чăрмантарса çўрекен.

Арман татах авăрма пуçларĕ. Мишук çăварне... чур! хăлхăна тăратса кăна пыр.

— ... Ĕнтĕ вăл нимĕн те ахаль пулмасть те-ха —тет малалла хĕрарăм, эпĕ, саншăн пулсан, пит хрхенсех тăмăп. Акă сăмаварне те çавăншăнах патăм. А-ара, ман сирĕн патăрта ĕç пур вĕт-ха, эпĕ çавăн çинчен калаçса пăхасшăнччĕ санпа. Ăçтан тĕлне килет пирĕн пек çынна, такăнтарсах пыраççĕ. Асту-ха эсĕ, лавкара илнĕ пусмана пасара тухса сутнăшăн çырса параççĕ те—ĕç-и вăл. Эпĕ пусмалла та сутман, ялана кĕпе çĕлесе е саппун туса тухатăп.

Петр Иванович кун хыççăн хĕрарăм кам иккенне ăнланчĕ, анчах хĕрарăм хăй кампа калаçнине тавçăрсах илеймерĕ-ха. Кăна мĕнле пĕлес? Кам вырăнне хурать мана вăл?

Шкул картишне вĕсем арлă-арăмлă çынсем пекех пырса кĕчĕç. Петр Ивановичăн шкул алăкĕнчен тулли витрепе шăпăр йăтса кĕрекен арăмĕ çак ăнсăртран тĕл пулнă мăшăр çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕ.

Вĕсем пўрте кĕчĕç. Калаçса лараççĕ. Хĕрарăм çăварĕ пулемет пек: Петр Иванович пĕр сăмах тĕртсе хунă çĕре вăл пин те пиллĕк сăмах такăлтаттарса кăларать.

— Итле ха, Иван Петровчă,—тет хĕрарăм. Петр Иванович ун çине чăр! пăхса илчĕ.—Ку ĕçпе эпĕ сан пата пĕркун хăвăр канцелерех пынăччĕ. Эсĕ судра ларнипе, ун чухне санпа калаçаймарăм.

А-а-а...—тăсса ячĕ Иван Петрович. Хĕрарăмăн пичĕ çутăлса карĕ: „Мана хăй те палласа илчĕ иккен-ха", терĕ пулмалла. Петр Иванович чут кулса яратчĕ, вăл сиксе тăчĕ те çăварне тутăрпа хупларĕ. „Мана ку, тем тесен те, Каримов судья вырăнне хурать", тесе шухăшларĕ вăл. Ăна унпа аташтарнисем халиччен пĕрре кăна пулман. Сăнĕсемпе вĕсем икĕ тумлам шыв пекех мар пулсан та, пĕр тăвана мая килеççĕ. Тум енчен илсен, Кудрявцев сторож (Петр Иванович

Кудрявцев—çак шкулти сторож вăл) Каримов судьяран пĕрре те кая мар якалса çӳрет.

Çак вăхăтра унăн арăмĕ сăмавар йăтса кĕчĕ.

— Ку мĕнле сăмавар?—терĕ вăл, Кудрявцев илнĕ сăмавара курсан.

— А-а, ку сан арăму пуль-ха, аван-и?—хĕрарăм Кудрявцев арăмĕ патне пырса алă пачĕ.—Эсĕ кунта ĕçлетне, учительницăра пуль-ха? Хăвăр шкулта пурăннăран калатăп-çке. Юрĕ. Вара, сирĕн пата килсе курас терĕм-ха. Ĕçпе çӳретĕп-çке, пĕччен хĕрарăма тупăнать вĕт.

Калаçу сĕтел хушшине кĕчĕ.

— Иван Петровчă, мĕн тăвăпăр-ха вара çав ĕçпе? Ахалех сӳнтерсе лартма мая килмĕ-ши?

— Иван Петрович пулсан, эпĕ аванах калаçнă пулăттăм та санпа ку ĕç çинчен, анчах мана хамăр учительсем Петр Иванович тесе чĕнеççĕ,—терĕ Кудрявцев, калаçăва ытлашши тăсмасăр.

— Петр Иванчă!...—хыпса ӳкрĕ çавăнтах хĕрарăм.

— Çапла, инке, эсĕ йăнăшнă. Эсĕ мана Каримов судья вырăнне хуратăн.

— Эсĕ кам пултăн-ха вара? Ара, чим-ха, пĕркун эсех лараттăн вĕт судра.

— Эпĕ çак шкулти сторож—Кудрявцев. Судра эп халиччен судьяра мар, заседательте те ларса курман.

Ытла-аванах чей ĕçсе ларакан хĕрарăм, сыпнă чейне çăтса яраймасăр, чыхăнса кайрĕ те мĕн-пурне апчху тунипе пĕтерчĕ. Чалт! турĕ аллинчи чей чашăкĕ сĕтел çине.

— Çапла, йăнăшрăн çав, инке. Малашне ун пек хăтланмăн ĕнтĕ,—терĕ Кудрявцев.—Эсĕ Каримов патне хăйĕн патне кай ку ĕçпе. Анчах, çакна ан ман вара: судьясем ун пек çынсем мар вĕсем, сутăн илеймĕн вĕсене! Каримов судья патне пырса пăх-ха эсĕ пĕр чĕрес пылпа, о-о-о!.. эп ăна пĕлетĕп, вăл пит тӳрĕ çын,—пылпа мар, темĕскерпе те вараланас çук. Пĕркун пĕри ун патне сар çу илсе пынă та, арăмĕ ухватпах ăсатса янă лешне. Вот арăмĕ те епле тӳрĕ çын ун... А-а, чим-ха, чим, инке, эсĕ кайма тесе тăтăн пуль-ха та... Э-е, сана кӳрентерес мар: сăмаварна, тен, юнерех патăн пуль эсĕ мана... чармастăп, илсе кай. Арăм, вăн, хамăрăнне те çĕнĕ сăмавар пекех тутарнă.

Хĕрарăм ним те чĕнеймерĕ. Мĕн каласси пур, мĕн пурне паçăрах каласа пĕтернĕ те. Паçăр Кудрявцевăн пулнă сăмавара хăрах хăлхинчен çаклатрĕ те тухса шăвăнчĕ.

**Иван Ара.**

## Улатăрти гравюрă шкулĕнче

П. Михайлов ӳкерчĕкĕ.



**БЫКОВ:** Директор юлташ! Эсир кайнăранпа çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленессипе тăвата класс валли тăвата алăк тунисĕр пуçне хальлĕхе урăх ним те тăваймарăмăр-ха.

**МЯСНИКОВ (директор):** Маттур, тăвансем! Малалла та çапла туса пырăпăр. Ыран занятисене тытăнăпăр. Анчах пирĕн хут та, сăрăсем те çук. Ну, ун çинчен хăçан та пулсан канашласа пăхăпăр.

# А Л Ь Б О М

Мана вăл хулăм хутлă тетрадьне тыттарчĕ. Ҫиеле тăйлăк-тăйлăк ларакан саспаллисемпе „Альбом“ тесе ҫырса хунă. Хăшпĕр листисене уҫкаласа пăхрăм та, мана унти ӳкерчĕксем тĕлĕнтерсех ячĕҫ. Кашнине тинкеререх пăхсан, ҫав ӳкерчĕксен хушшинче темĕнле ҫыхăну тĕвви пур пек туйăнать.

— Мĕскер ку сан: калав-и, повесть-и? — тесе тӳрех ыйтрăм эп.

— Писатель пулсан, эпĕ ҫав ӳкерчĕксем тăрăх пĕр роман ҫырмалла,—терĕ вăл. — Пĕлессӳ килсен, эпĕ сана ку альбом, мĕне пĕлтернине каласа пама пултаратăп.

Пирвайхи листа ҫинче лапсăркка йăмрасемпе ҫупăрланса ларакан танлĕ пӳрт туса хунă.

— Ҫакăнта ҫуралса ӳснĕ эпĕ, — терĕ вăл. Вара тепĕр листине уҫрĕ те, унта вăрмана кĕрсе каякан ҫул курăнса кайрĕ.

— Ҫакă ҫулпа эпĕ вунҫичĕ ҫула ҫитсен килтен тухса кайнă. Вăл ҫул мана чăн малтанах ҫак ҫурта кӳртсе ячĕ.

Вăл виҫҫĕмĕш листине уҫса, мана типографи ҫурчĕн ӳкерчĕкне кăтартрĕ.

— Анчах унти ĕҫ мана илентермерĕ, — терĕ вăл, тăваттăмĕш листине уҫса. Унта почта ҫуртне кăтартнă. — Ҫăмăлрах ĕҫ шыраса, эпĕ ҫакăнта пырса кĕтĕм.

Тепĕр листине уҫсан, тӳп-тӳрĕ выртакан чугун ҫулне куртăмăр.

— Ку ҫулпа таҫта кайнă тата? — терĕм эпĕ.

— Ниҫта та кайман, — терĕ вăл. — Эпĕ ун ҫинче ĕҫленĕ. Почтăра кĕлесе ларас килмерĕ ман.

Улттăмĕш листа ҫинче вăрман. „Кунта ĕнтĕ вăл чугун ҫулĕ ҫинче ĕҫленĕ вăхăтра охотăра кĕлесе ҫӳренĕ“, тесе шухăшларăм эп. Анчах...

— Ҫак вăрманта эпĕ десятник пулнă, — терĕ вăл. — Хăвах пĕлетĕн, чугун ҫул ҫинче ĕҫлесси ҫăмăл мар. Ҫавăн пекех, вăрман хуралҫи пуласси те ман кăмăла тавăрчĕ. Йĕпе ҫине сапа тенĕ пек, эпĕ унта шăп кăна шăрăх вăхăтра кĕтĕм те вăрăм тунасенчен аран тарса хăтăлтăм. Акă эп продавец.

Ҫиччĕмĕш листа ҫине лавка туса хунă.

— Анчах кунти шăнасем вăрмантинчен те усалтарах пулчĕҫ, пыр шăтăкне вĕчĕлтеттерме тытăнчĕҫ, терĕ вăл.

Тепĕр листа ҫинче эрех кĕленчи.

— Эсĕ эрех лавкинче ĕҫленĕ-и? — ыйтрăм эп.

— Ҫук. Ҫав лавкара тăнă чухне эпĕ эрех ĕҫме вĕрентĕм. Ҫав мана юрамарĕ. Лавкари эрехе ĕҫсе ярасран хăраса унтан та тухса кайрăм.

Тăххăрмĕш листи ҫине йĕм тӳмми туса хунă.

— Вара эпĕ Ҫĕрпӳри тӳмме фабрикĕнче ĕҫлерĕм. Манăн унта та ĕҫ ăнмарĕ. Ҫав пулă хуппи пек япаласемпе аппаланас килмерĕ,—тет.

Вуннăмĕш листа ҫинче унăн пĕр пĕчĕк пичĕке кĕрлесе ларать.

— Кайрăм эпĕ хамăр яла, ялсоветĕнче секретарь пулса ĕҫлерĕм. Секретарь чухне епĕ ҫак пичĕкерен сахал мар кăрчамана туртнă. Мана унтан ĕҫке ернĕ тесе сирпĕтрĕҫ.

Вунпĕрмĕш листа. Кунта вăл хăй хăма заводĕнче ĕҫленине кăтартнă.

Вуниккĕмĕш листи ҫине чăхă пусма ларнине туса хунă. Эпĕ кулса ятăм.

— Ку ĕнтĕ инкубаторта ĕҫленине пĕлтерет сан, — терĕм эпĕ. — А-яй-й, ҫта-ҫта кăна ҫитмен ши эсĕ!..

— Апла мар, — тесе хучĕ вăл? — Кăна ун пек ăнланма юрамасть. Заводра мана «Ĕҫ кĕнеки» пачĕҫ. Ҫавăнтанпа вара пусăрăнса ĕҫлетĕп. Халĕ эп заводри ударник. Ҫакăнпа манăн калав пĕтет.

— Санăн тепĕр листи уҫăлмасăр юлчĕ, — терĕм эп.

— А вăл иртнине кăтартать, — терĕ те вăл, ăна та уҫса пачĕ. — Ку вăл самăй лара-тăра пĕлмен кайăксенчен пĕри — ҫерҫи.

— Ну, ҫерҫи... Мĕне пĕлтерекен кайăк вăл?

— Калап вĕт, иртнине пĕлтерет: эпĕ летун пулнă, — терĕ вăл.

**Яккупа пĕр тăван.**

---

# Хальхи арăмсем

— Ав унта сĕтĕрĕнет! — терĕ манăн лавҫă тилхепепе лашана хӳтерсе пынă вăхăтра.

— Ăҫта. Кам? — ыйтрăм эпĕ Варлам мучирен.

— Авă, ав, ыраш пусси хĕррипе вар пуҫнелле ҫитет, — пушă аврипе тĕллерĕ вăл.

— Мĕнле сĕтĕрнет, тен ҫын пĕр-пĕр усăллă ĕҫ тума васкать пулĕ? — тетĕп.

— Ха-ха-ха, усăллă ĕҫ, ытла култаратăн эсĕ, шăллăм, пăх-ха эсĕ лайăхрах куҫупа, кам вăл? — уҫă кăмăллă сасăпа ҫăмăллăн кулса ман еннелле пăхрĕ мучи.

— Те хĕрарăм, те арҫын, тумтирĕ вăрăм пек, чăн та куҫа хăнăхман япалана ыраш пусси ҫийĕн тинĕс пек хумлăн вылякан ăшă ҫийĕнче уйăрса илеймерĕм, — терĕм Варлам мучие.

— Куҫа хăнăхман япала ҫав сире, а пире куҫа хăрпăклатнă япала, ҫавăнпа катаранах паллатпăр. Ҫăхан вĕт вăл, ҫăхан, чиркӳсĕр, приходсăр тăрса юлнă ҫăхан, тек ялтан-яла вилĕ е ҫуралнă ача шыраса чупать, йĕрĕх пек ҫыпăҫать те уйăрălма та пĕлмест, — хушса хучĕ мучи.

— Халĕ те тĕне кӳртекен тупăнать-и? — ыйтатăп мучирен.

— Тăхта-ха, ан васка, эпĕ сана ҫул кĕскетмелле пĕр мыскара каласа парам, — сухалне якатса илсе чĕлĕмне хыпрĕ манăн лавҫă. Тилхепине урапа урлăҫҫинчен ҫыхса чĕлĕмне чĕртнĕ хыҫҫăн, вăл пуҫларĕ юмах мар, чăн пулнă ĕҫ ҫинчен калама.

— Иртнĕ ытларикун, — пуҫларĕ Варлам мучи сăмахне, — Элĕк районĕнчи Вырăс Сурăм попĕ Иванов Трак районĕнчи Мăн Шетмĕ ялне пырса кĕнĕ те: тĕне кӳртмен ачасем пур-и, 5—6 ҫулхисене те тĕне кӳртетĕп, христос ҫумне ҫыпăҫтаратăп, тесе килĕрен ыйтса ҫӳрет. Попĕ яла лăпах арăмсем уйран каҫхи апат хатĕрлеме киле тавăрăннă вăхăтра килнĕ. Ап-па! Унччен те пулмарĕ Микулай арăмĕ, Ефстав арăмĕ, Ҫтенкипе Спиридон арăмĕ, Макҫăм карчăкĕ 2—3-шер ача

çавăтнă, витресем йăтнă, эпĕ сыхлакан колхоз сачĕ çумĕнчи çăл патнелле ыткăнса пыраççĕ. Эпĕ, ну мыскара, улма сыхласа ларнă çĕртрех „каçхи кĕлĕре" пулатăп, тетĕп. Хам курăнас мар тесе, пытанарах, йывăçсем хыçĕнчен вăрттăн пăхса тăратăп. Тараса çăл тавра 6—7 арăм, ачесем тата поп пуçтарăнса тăчĕç. Микулай арăмĕ, шӳт тума юрататаканскер: — 6 витре ăсса кăлартăм, çитет пулĕ, пачăшкă, тĕне кӳртме тытăнатăр пулĕ тесе çӳхе тутисене хуçкалать. Иванов поп васкарах хĕреслĕ сапунне çакса алла хĕрес илчĕ. Кĕсъерен пĕчĕк кĕнеке илсе катăк шăлĕ витĕр шăхăрса тискеррĕн мĕкĕрме пуçларĕ.

— Тăхта-ха, пачăшкă, эсĕ манăн Сентие мĕн ятлă хуратăн, ыйтрĕ Микулай арăмĕ.

— Кондратий! — сиввĕн çавăрăнса пăхрĕ поп, мĕкĕрме чарăнса.

— Кантрашка ятлă пулать-и-ха вăл, ой апла пулсан кирлĕ мар, ан тив ачана, — ачана каялла илчĕ попран.

— Календарь çинче Сенти ятлă ят çук, инке, Сенти вăл тĕне кĕмен чăваш ячĕ, — хирĕçлеме пуçларĕ поп.

— Тĕне кĕмен чăваш ячĕ пултăр апла, эх! Сенти чĕппĕм, Сентийĕм! — ыталаса илчĕ вăл ачине.

— Санăн календарĕ те 30 çул ĕлĕкрех тухнăскер пулас, — хушса хучĕ Макçăм карчăкĕ.

— Календарĕ мĕн вăл, эсир аллине пăхăр-ха, ку алăсем кăçал шыв курман пулĕ,—тĕртрĕ поп аллинчен Ефстав матки.

— Хи-хик, алли татах-ха, пăхăр-ха сухалне, лаппапа кĕççеленсе хытса ларнă, сухал мар ку санăн, йĕпе пăру хӳри пулмалла, ха-ха-ха, хи-хи, — янтратса кулчĕç арăмсем, Стенки арăмĕ поп сухалне силлесе туртсан.

— Кай, ача ят хуртаратăп-и сана: алли хура, сухалĕ лапраллă, — тăрăхлама тытăнчĕ Спиридон арăмĕ.

— Ан калаç, аллине çăвам, сухалне тирпейлем, старик тесе ыталас тейĕн, — тӳркес чĕлхепе йăпатма тытăнса витрене аллисене чикрĕ поп.

— И-и, уй тункати, ан чик ирсĕр аллусене таса витре çине! Çухрăмран эрех пички шăрши кĕрет, акă халех хăсăк килет, — хушса хурса витрине урипе тĕксе йăвантарчĕ Микулай арăмĕ.

— Сăмси шăтăкĕсене пăхăр-ха, çырлахах, виççĕн милĕксемпе кĕрсе ларса хăрămласа тухмалла, пăт çурă тусан тата табак хăрăмĕ тулнă пулĕ, — каллех кулчĕ Спиридон арăмĕ.

— Ку атăсемпе хĕлле йĕлтĕрсĕрех ярăнатăн пулĕ эсĕ? — ыйтрĕ тепри.

Иванов поп хăй мĕнле ярăнĕнче мăшкăлу мишенĕ пулса тăнине сисрĕ пулас: — тĕне кӳртетĕр-и? — ыйтрĕ кĕскен.

— Тем тăватпăр çав, пачăшкă? — иккĕленнĕ пек каларĕ пĕри.

— Тĕне кĕмесĕрех аван пурăнаççĕ...

— Ахалех таса çитĕнеççĕ, — шавлама тытăнчĕç арăмсем.

— Хм, ачусене тĕне кӳртмесĕрех пурăнас тетĕр? — кĕççе сухалне силлерĕ поп.

— Тĕне кĕмесĕрех! — харăс ответлерĕç арăмсем.

— Христосран уйăрлатăр апла...

— Çук, христоспа пирĕн нимĕн ĕçĕ те çук, — çирĕплетрĕç, попа хирĕç.

— Апла эсир турра маннă! — шăрчĕсене тăратрĕ поп.

— Ачисене пăхма кĕнеке, журнал урлă вĕрентĕмĕр, тырри-пуллине хамăр алăпа хамăр тăватпăр...

— А турă памасан? — хĕрарăмсене пӳлсех, хăйĕн сăмахне савăлласа лартрĕ поп.

— Эпир колхоза кĕни тăхăр çул çитрĕ, тăхăр çулта санăн турруна тăхăр хут та асăнман, санăн туррунтан тăхăр пĕрчĕ те илмен, пирĕн тырăсем çапах хӳхĕм пулаççĕ, мĕншĕн тесен эпир телейлĕ çăлтăр айĕнче пурăнатпăр, — терĕ Ефстав матки.

— Санăн турру та сан пекех эрех кӳпсе çӳрет пулмалла, хи-хих-и!

— Хи-хи-хи! Тавай хăйне тĕне кӳртес! — Айтăр хăйне тĕне кӳртес! — тенĕ сăмахпа Микулай арăмĕ витре илсе попа шывпа ярăнтарчĕ.

Ну ĕç пуçланчĕ тесе тăратăп. Чăтаймарăм, йывăç хушшинчен тухса карта çине хăпарса лартăм. Манăн арăмсем витресене йăтма ĕлкĕрчĕç çех, поп юпах тиха кашкăртан хăранă пек çăл патĕнчен ял вĕçнелле тапса сикрĕ.

Çăл кутĕнчен урам тăрăх ял вĕçне çитиччен кăшкăру тата кулнă сасăсене илтсе çирĕм арăм тухрĕç пулĕ. Урам тулли арăм, ача-пăча тăрать, попĕ çавăрăнса пăхмасăр кастарса пырать. Урамри пăрусем попран хăраса хӳрисене тăратса тăкăрлăкпа çырманалла вĕçтереççĕ, вăрçакан автансем вăрçма пăрахса, тарса кĕрсе хапха айĕнчен пăхса тăрса юлчĕç. Ну, мыскара, кун пек мыскара 87 çула çитсе те курман эпĕ. Çапла, ывăлăм, хальхи арăмсем, — терĕ мучи юлашкинчен.

**Сӳпенкке Илли.**

# Ĕçлемен аппарат

— Çак Буинскинчи хăма завочĕн аппарачĕ пĕрре те ĕçлесе кăтартмарĕ-ха пире.

— Мĕн суятăн. Эпĕ халь çеç çавăнтан тухрăм: директор вырăнта, бухгалтер-счетоводсем пурте ĕçлесе лараççĕ. Э-эй, юлташ, эсĕ вĕсен аппарачĕ çинчен ахалех элеклетĕн.

— Çу-ук, вăл мар, калаçакан кино аппарачĕ çинчен калатăп эпĕ. Директор ăна илсе килсенех шкафа питĕрсе лартрĕ те халь те кăлармасть.

**Буинский.**

# КУЛАС КИЛЕТ

## Якурпа Якуш

Çырма хĕрринче вылянă вăхăтра:
— Чим-ха, итле!—терĕ,—Якуш Якура.
— Эс маттур ача вĕт?—Маттур, начар мар!—
Тет лешĕ.—Апла-тăк халех киле май
Атя, акă çак каçмапа хăвăрт кай,
Çырма урлă каç эс—чупса, утса мар!
Çапла пĕр ўкмесĕр унта эс каçсан,—
Маттурлăх татах ўсĕ сан.
Чупрĕ Якур... хăй кулать йăхлатса...
Каçмине леш тĕртрĕ те хăй урипе—
Çав самантрах Якурĕ пĕвĕпе
Лачакана ўкрĕ лаплатса.

....

Сыхăлăхсăр нихçан та эс ан пурăн,
Асту, Якуш пек çынсем унсăрăн,—
Эсĕ ик куçлă пулсассăн та,—
Лачакана сĕтĕрĕç сана та.

Н. Евдокимов.

## Сăнран пăхса пĕлекен

**Нейтральнăй çĕршыв представителĕ:**—Ой, ку çынăн сăн-пичĕ кăмăла килмерĕ. Хăш государство çынни-ши вăл?

— Халĕ Европăра вăрçакан пĕр аслă государствăн представителĕ.

**Нейтральнăй çĕршыв представителĕ:** —Ну-у... Хм... апла иккен... Каларăм сăн-пичĕ хитре мар, куçĕсем питех те килĕшўллĕ тесе. Ун пек чипер куçлă çынна урăх тупма хĕнтерех ĕнтĕ.



— **Мĕншĕн пўрнепе шутлатăн? Шут çинче часрах пулать вĕт.**

— **Шут çинче эпĕ хам хуçалăх паракан тупăша шутлатăп. А колхозра тунă ĕçкунĕсене шутлама манăн пўрне те çитет.**

В. Лисевич ўкерчĕкĕ. Бюро-клише ТАСС.

## Картă умĕнчи калаçу

Ваçли мучи паян, хулана кайсан, тĕнчере пулса пыракан событисене сăнаса пыма картă илсе килчĕ. Унăн пуринпе те интересленме юратакан ачи чупса пычĕ те:

— Атте, мĕнле картин вара ку?—тесе ыйтрĕ.

— Картин мар, картă вăл, унта тĕнчери çĕршывсене ўкернĕ,—ăнлантарчĕ ашшĕ.

Ашшĕ пирĕн тăван çĕршывăн чиккисене йĕрлесе кăтартсан, ача тĕлĕнсе кайрĕ:

— Ой-о-ой. Ман ытам та çитмест ăна çавăрса кăтартма! Ку тата мĕнле çĕршыв?

— Япония.

— Пирĕн пограничниксем Хасан кўлли патĕнче хĕненисен çĕршывĕ-и. Самурайсем хăйсем вĕтĕрен мăшкăласа вĕсен çĕршывне çапла пĕчĕккĕ тунă-и вара? Ха, виçĕ пўрне сарлакăш те çук.

## Кун йĕркипе

— Степан Макарович! Мана счетовода хăçан лартăн?

— Паянах лартăттăм та, анчах халĕ ĕçлекен счетовод прогул тумарĕ-ха. Прогул тусанах ăна кăларса ярса сана лартатăп.

## Тăккаланчăкпа кĕрешмеççĕ

— Çапнă тырра аран вырнаçтарса пĕтертĕмĕр. Амбар лăках тулса ларчĕ.

— Лăках тулчĕ тетĕн. А эсир мана вырнăçапнă чухне тырра тăккаланăшăн ятлаттăрччĕ. Тăккаланман пулсан, ăçта чикеттĕрччĕ-ха!

## Çентябрĕн 1-мĕшĕнче

— Ача-ам, маляра тухман пуль-çке эс?

— Ма?

— Ара, йĕму краска кăна та.

— А, вăл—пирĕн шкул партăсене ĕнер кăна сăрласа пĕтернĕ те—çавăнпа.

## Тĕлĕк

— Вот тĕлĕкў-масару... тем курса тăрăн.

— Мĕнле тĕлĕк тата?

— Хамăр пуçлăх çинчен тĕлленнĕ те калама хăяймастăп.

## Икĕ ача

— Петька, эс пирĕн пата ма килтĕн. Атте мана санпа вылямa хушмарĕ. Сан аçу прогульщик.

Унтан, Петька кăмăлсăр пулнине кура, çапла хушса хучĕ:

— Ан хуйхăр, Петька. Малашне ăса кĕрĕ-ха аçу—вара пĕрмай иксĕмĕр выльăпăр.

## Çырассипе кăларасси

— Эпĕ çак пьесăна шăп пилĕк уйăх çыртăм. Шухăшласа çырма нумай вăхăт иртмерĕ.

— Пилĕк уйăхра çырса пĕтерни мĕн вăл. Эсĕ ăна Чăвашиздата парса тепĕр пилĕк уйăхранах кĕнеке туса кăлар, вара мухтанма пултаратăн.

# ÇИЛОС ВАЛЛИ

Етӗрне районне кӗрекен Урапакассинчи колхоз клубне тахçантанпах питӗрсе тытаççӗ. Урайӗ витӗр курăк шăтса тухнă.

Н. Сверчков худ. ӳкерчӗкӗ.




— Çăрине ма вататăр, юлташсем?

— Уççи çук, ара. Пире силос тума курăк кирлӗ.

*Н. АЙЗМАН.*

# Утне ҫитмен туртине

*(3 пайлă комеди)*

**(Юлашки. Пуҫламӗшӗ 12—13-мӗш №-сенче)**

III-мӗш ПАЙӖ.

Сад пахчи. Карта тăрăшшӗпе сирень, улма йывăҫҫисем. Варринче сӗтел, хăмаран ҫапса тунă тенкелсем. Хӗрсем юрласа тӗрӗ тӗрлесе лараҫҫӗ.

КУДРЯШОВ (пытанса пырса, хут купăсне сасартăк ҫухăртать).

ХӖРСЕМ. Ах!

УРИНЕ. Ай-уй!.. Шартах сиктерчӗ.

ХВЕТУҪ. Мӗн ҫапкаланса ҫӳретӗн ҫын пахчинче!

КУДРЯШОВ. Пӗрре те ҫапкаланса мар, тӳптӳрех килтӗм. Эсир мӗн тума пуҫтараннă кунта?

ХВЕТУҪ. Эпир тӗттӗм пуличчен ҫак тӗрре тӗрлесе пӗтерес терӗмӗр. Каҫчен пӗтермесен, договор тăрăх, пӗтӗм ӗҫ харама кайма пултарать, тет Шăпчăк.

УРИНЕ. Вата хусах валли мӗн пур кунта?

КУДРЯШОВ. Хӗрсем, эпӗ ман ҫинчен калаҫнине пӗрре те юратмастăп. Итлӗр-ха, эпӗ сире сутмалли юмах ярса кăтартăп! Итлетӗр-и?

ХӖРСЕМ. Атя кала!

КУДРЯШОВ. Ну, шутсăр йывăр вара, никам та пӗлеймест. Ну, хăлхăрсене тăратăр!

ХВЕТУҪ. Пуҫла хăвăртрах, сӗлӗ арпи!

КУДРЯШОВ. „Алăпа тытман, кăмакана хывман, сӗтел ҫине хуман, ҫӗҫӗпе касман,—ăна ҫимен ҫын ҫук“. Ну, мӗн пулать?

ХВЕТУҪ. Ай, мӗн пулать-ши ку?

КУДРЯШЕВ. Ну, пӗлӗр!

ХВЕТУҪ. Тепӗр хут кала-ха!

КУДРЯШОВ. Илтмен пушăн икӗ хут чан ҫапмаҫҫӗ.

УРИНЕ. Маншăн кала-ха ӗнтӗ!

КУДРЯШОВ. Саншăн пулсан пин хут калама та хатӗр (питӗ хăвăрт калать): „Алăпа тытман, кăмакана хывман, сӗтел ҫине хуман, ҫӗҫӗпе касман—ăна ҫимен ҫын ҫук“. Ну ăнлантăн-и?

УРИНЕ. Ҫук. Кала-ха мӗн пулать?

КУДРЯШОВ. Каламастăп. Халь ӗнтӗ пурне те сутатăп. (Хветуҫа) сана... Насар мучине. (Кулаҫҫӗ). Сана... (Уринене) Киремет Кирилине (кулаҫҫӗ). Сана... (пӗр хӗре) урамри Шатăрки старике. (Кулаҫҫӗ). Мӗн эсир, хӗрҫуммисем пек пур те ӗҫлӗ... Шăпчăка качча парас теместӗр пулӗ те?.. Е кам та пулин сирӗнтен каять-и?

ХВЕТУҪ. Эпир пурте каясшăн пуль те-ха... Илекенни никам та ҫук-ҫке. Хи-хи-хик!

КУДРЯШОВ. Епле ҫук? Акă эпӗ. Мӗнрен начар?

ХВЕТУҪ. Эсӗ пирӗн пек ҫамрăксене юратмастăн ҫав.

КУДРЯШОВ. Конешнă. Ху халь ҫăкăр пӗҫерме те пӗлместӗн пуль-ха.

ХВЕТУҪ. Вӗренӗп-ха. Ҫуралсанах ҫиме те пӗлмен те...

ШАПЧАК (кӗрет). Тата нумай юлчи, хӗрсем?

УРИНЕ. Пӗр-иккӗ тирсе туртмалăх ҫеҫ юлчӗ.

ХВЕТУҪ. Эпӗ пӗтертӗм.

ХӖРСЕМ. Эпӗ те, эпӗ те...

ШĂПЧĂК. Ну, мастерскойне кайăр та, якатăр. Хветуҫ эсӗ пилӗк комплект хатӗрлесе хур вара! Халех илме килеҫҫӗ пулӗ. Анчах мансăрăн ан парса ярăр! Ордер ҫырмалла.

ХВЕТУҪ. Юрать. Ну, Гриша, кала купăсна!..

КУДРЯШОВ. Купăса мӗн калас ăна. Хăех калать вăл, пăх (выляса ярать).

ХӖРСЕМ (юрлаҫҫӗ).

„Урампа пырать савни
Купăсне тăскаласа
Юнашар унпа Сани
Пырать сăвă каласа“ (каяҫҫӗ).

ШĂПЧĂК. Мӗншӗн ку Хӗветӗр халиччен килмерӗ-ха, мӗншӗн-ха эпӗ хам валли нимӗн те выӗран тупаймастăп? Ҫичӗ ютри ҫын ҫураҫма килнӗ пекех. Ҫапах та ӗмӗрте пӗрре ҫеҫ пулакан япала ҫав. Темме ҫӳҫентерет. (Пауза). Ниепле те кӗтсе илейместӗп пуль ку Хветӗре.

СМЕЛОВ (кӗрет). Шăпчăк!..

ШĂПЧĂК. Хветӗр, манман-и эс мана?

СМЕЛОВ. Ăҫтан манас ман сана!

ШĂПЧĂК. Каяр эппин атте патне!

СМЕЛОВ. Каяр пулас атте патне.

ШĂПЧĂК. Эсӗ пӗҫҫенех-и?

СМЕЛОВ, Тăвайкасри йысна килет.

ШĂПЧĂК. Айда пӳрте (Микита кӗрет, аллинче сăра витри, тата эрех). Акă, атте килчӗ.

МИКИТА. Килтӗр те-и?

СМЕЛОВ. Килтӗмӗр.

МИКИТА. Пӗччене́х-и?

СМЕЛОВ. Йыснапа.

МИКИТА. Эсир ăҫталла?

ШĂПЧАК. Ботинка тăхăнма.

МИКИТА. Йысну килсе тухсан, кунта килме каласа ярăр ăна!

СМЕЛОВ. Юрать (Смеловпа Шăпчăк каяҫҫӗ).

МИКИТА. Хветӗр сан пушмакна курман пуль. (Сăрине сӗтел ҫине лартать). Вот. Кунта уҫă. Пӳртри мар.. сывлăш та таса... пур енчен те аван. Сӗтел ҫине сармалаччӗ те... Манăн карчăкки чумантарах-ҫке, (аяккалла) хăвăртрах, ара!.. Ҫынсем киличчен хатӗр пултăр.

ВАРВАРИ (кӗрет). Таҫтан шыраса тупать вара. Пӳртре мӗн пулнă-ха. (Сӗтел ҫине тӗрленӗ скатерт сарать.) Кунта пуҫҫапас тăвас пулсан, ни турри ҫук, нимӗн те ҫук.

МИКИТА. Туррипех антранă-ҫке ҫак. Хатӗрле хăвăртрах!

ВАРВАРИ. Манăн, тем, иртен вара шухăшсем улшăна пуҫларӗҫ-ха. Хӗрӗ юратмастех пулсан... каялла тавăрмалла пулать пуль.

МИКИТА. Хӗрне ҫураҫмасăрах каялла тавăрасси

ҫинчен юмахлать. Ун пек ҫынна паратпӑр халь, тата мӗн, кача-майри кирлӗ-им?

ВАРВАРИ. Юрӗ-ҫке ӗнтӗ, юрӗ. Хамах ӑна ҫураҫасшӑн та... Кӗрӳ усал пулсан, ҫылӑхӗ хам ҫине пултӑр ӗнтӗ.

МИКИТА. Ан калаҫ кирлӗ мара! Сӑра куркисем кирлӗ пулаҫҫӗ. Илсе кил!

ВАРВАРИ. Сӗтел ҫине хума пуҫламан ҫӑкӑр кирлӗ пулать пуль.

МИКИТА. Мӗн аппаланмалли пур. Сан ҫӑкӑрна такам пӑхса ларать!?

ВАРВАРИ. Укҫине... ӗлӗк укҫа хунӑ чух... ҫӑкӑр ҫине хуратчӗҫ те-ха... (к а я т ь.)

МИКИТА. Ӗлӗк... ӗлӗкхипе антӑранӑ... (п а у з а). Ку Хветӗрӗн хӑш йыснӑшӗ пулать-ши? Марье упӑшки пулсан, кӑштах паллатӑп ӗнтӗ. Дарье упӑшки пулсан—курман, пӗлместӗп. Халиччен те хутшӑнман та... (Ҫ ы н с е м к и л н и н е к у р с а) А-а, килӗрех, килӗр!

(Ҫ е м е н п е М а в р к ӗ р е ҫ ҫ ӗ.)

МАВРИ. Килетпӗр-ха. Чупаҫҫӗ-и! Килнӗ чухне туллие хирӗҫ пултӑмӑр-ха, телей пулать пуль тетпӗр.

ҪЕМЕН. Аван пурӑнаҫҫӗ-и! (А л ӑ п а р а т ь).

МИКИТА. Ку ӗнтӗ ашшӗ вырӑнче пулать-и?

ҪЕМЕН. Ҫаплах. Ашшӗ пулатӑп.

МИКИТА. Вырӑн тупса ларӑр!

МАВРИ. Пирӗн каччи ҫухалчӗ-ха. Кунта килмерӗ-и?

МИКИТА. Халь ҫех кунтаччӗ.

МАВРИ. Эпӗ кайса пӑсӑрлантарам-ха. Ӑҫта каймалла пулнӑ-ши тата? (К а я т ь.)

ҪЕМЕН. Аван сад пахчи сан. Хӑвах лартса ӳстертӗн-и?

МИКИТА. Хамах. Тытса ларттарма пирӗн пуянсен пек укҫа пулман вӗт.

ҪЕМЕН. Миҫе тунката-ха?

МИКИТА. Алла яхӑн пулас.

ҪЕМЕН. Ку, кӑвак ҫурӑлаканнине ӑҫтан тупса лартрӑн тата?

МИКИТА. Леш, пирӗн ялти Хупах Караҫӑмне пӗлетӗн пуль-ха, ҫавсем патӗнче пӗр-икӗ ҫу улмуҫҫи сыпкаласа хӑтлантӑм, тата ҫакӑн пек сиренсене куҫарса патӑм. Ҫавӑн чухне пӗр-ик хунав илсе килнӗччӗ те... Ҫавсенчен хунаттартӑм. Икӗ ҫул улмуҫҫи сыпнӑшӗн пӗр пус та тӳлемерӗ, шуйттан хыт кукарӗ. Вилсе кайрӗ, ҫавӑн ҫинчен асӑнмарӗ те... Кулаксем пурте ҫавнашкал пулнӑ ӗнтӗ...

ҪЕМЕН. Ҫапла, куркаларӑмӑр ӗлӗк, самай.

МИКИТА. Эпӗ сана тӳррипех калам. Пайтах ӗҫлесе асап курнӑ вӑл шуйттан кулаксем патӗнче. Ман арӑм вӑн, хӗре ӗлӗкхи кулак таврашне парса, ҫавсемпе хурӑнташлӑ пуласшӑн та... Кирлӗ мар. Хамӑн хӗре нихҫан та ун пек ҫӗре кайма хушас ҫук. Эп мӗнле шухӑшланине ӑнланатни вара эс, хӑта?

ҪЕМЕН. Ӑнланмасӑр вара...

МИКИТА. Кӑшт лар-ха. Эпӗ черкесем илсе килем. Эрех ӗҫсен калаҫӑпӑр. (К а я т ь).

ҪЕМЕН. Манӑн Йӑванӗ ӑҫта ҫӳрет-ши тата? Хыҫҫӑнах тухрӑм-ҫке.

ҪТАПАН (к ӗ р е т). Аван ҫӳреҫҫӗ-и!

ҪЕМЕН. Аван-ха. Эсир ӗҫпе-и?

ҪТАПАН. Ӗҫпе. Арӑм шӑлнӗ хуса килчӗ? „Кайса лар-ха эсӗ Микита патне“, тет. „Сӑмах пулать унта“, тет. Мӗнле ӗҫпе?—тетӗп те... „Унта курӑнать“, тет. Эпӗ палласах та каймастӑп та... Хӗрӗн ашшӗ эсӗ пулмастӑн пулӗ?..

ҪЕМЕН. Ҫук. Эпӗ ютран-ха. Ӗҫпе килтӗмӗр те...

ҪТАПАН. Ют пулсан... санӑн ӗҫӳ пирӗнни пек васкавлӑ ӗҫех мар пулӗ. Эсӗ паянлӑха пире ан кансӗрле-ха!

ҪЕМЕН. Эпӗ хам-та чӑннипе килнӗ ҫын. Ӗҫӗ вӗсне ҫитиччен ех ларас пуль тетӗп. Сана мӗнле ӗҫпе килме каланӑччӗ, каласам!

ҪТАПАН. Паян кунта хӗр ҫураҫаҫҫӗ тет-и.

ҪЕМЕН. Хӗр ҫураҫаҫҫӗ ҫав. Эсӗ хӗрӗн тӑванӗсенчен пулмарӑн пуль те?..

ҪТАПАН. Темле каламалла. Эсӗ те ҫав ӗҫпех-и?

ҪЕМЕН. Ҫав ӗҫпех.

ҪТАПАН. Апла эпир иксӗмӗр те пӗр ӗҫпе.

ҪЕМЕН. Эсӗ кам пулатӑн вара?

ҪТАПАН. Йыснӑшӗ пулатӑп.

ҪЕМЕН. Апла пулсан пӗлӗшлӗ пулатпӑр.

ҪТАПАН. Аякрисем пулатӑр-и?

ҪЕМЕН. Иккассисем. (А я к к а л л а). Акӑ, ашшӗ килет.

ҪТАПАН. Э-е...

МИКИТА (к ӗ р е т). У-у, кунта тата ют ҫын пур иккен.

ҪТАПАН. Пур-ха.

МИКИТА. Инҫе каятӑр-и?

ҪТАПАН. Кунта килтӗмӗр ӗнтӗ.

МИКИТА. Юрать, ӗҫпе пуль-ха?

ҪТАПАН. Ӗҫӗ мӗнӗ... путек-сурӑх ҫухатсаччӗ те... Ҫавна шырама тухрӑмӑр.

МИКИТА. Самайранпа шыратӑр-и?

ҪТАПАН. Паян ҫех-ха.

МИКИТА. Кӗтӳ яриччен кӗтсе ларӑрах.

ҪТАПАН. Эсӗ, хӑта, ӑнланаймарӑн пулас! Тӳррипе каласан, хӗр ҫураҫма килнӗ эпир.

МИКИТА. Мӗншӗн тӳрех калас мар! Вӑрлама килмен вӗт!

ҪТАПАН. Ӗлӗкрен йӑли ҫапла пырать те...

МИКИТА. Кам пулатӑр-ха эсир.

ҪТАПАН. Йыснӑшӗ пулатӑп.

МИКИТА. (Ҫ е м е н е) Эсӗ кам вырӑнче пулатӑн апла?

ҪЕМЕН. Эпӗ ашшӗ вырӑнче пулатӑп пулӗ.

МИКИТА. А-а, пит аван. Айтӑр, сӗтел хушшине куҫса ларар!

ҪЕМЕН. Лармалла пулсан, ларас. (Л а р а т ь.)

ҪТАПАН. Ман хамӑн та сикес пуль (л а р а т ь). Ӑҫта пирӗн ҫамрӑксем, курӑнмаҫҫӗ?

МИКИТА. Вӗсем кӗлетре пулмалла.

ҪЕМЕН. Тумланаҫҫӗ пуль-ха.

ВАРВАРИ (ҫ ӑ к ӑ р, и к е р ч ӗ, ч ӑ к ӑ т и л с е к ӗ р е т т е с ӗ т е л ҫ и н е х у р а т ь). Ан кӳренӗрех, нумай кӗтмелле турӑм сире!

ҪЕМЕН. Ӑҫта васкас. Тул ҫутӑлличчен тем тумалӑх та вӑхӑт пур.

ҪТАПАН. Ӗлӗкхи йӑлапа, хӗре ҫурҫӗр иртсен тин ҫураҫнӑ та... Ман шухӑшпа ӑна пӑхӑнмаллиех ҫук.

МИКИТА. Мӗн вӑхӑта иртерес. Карчӑк, кил, лар! Ларса калаҫар та...

ВАРВАРИ. Йӑлине тӑвар ӗнтӗ, старик?

ҪЕМЕН. Туйне хӑҫҫан тӑвас тетӗр?

МИКИТА. Ӗлӗкхи йӑлапа туй туса хӑтланмастпӑр пулӗ. Хальхин пек тӑвас! Ҫӗнӗлле!

ВАРВАРИ. У-у, апла ĕлĕкхи çынсенчен катăк пулас марччĕ... тем туса хурăтăп пулĕ ĕнтĕ хам ухмах пуçпа. (Й ĕ р е т.) Хĕрĕпе каччи киличчен тăхтар-ха, старик! Куç хыçĕнче сăмах татса хурăпăр та... хĕре ĕмĕрлĕхе нушалăха хупса хурăпăр... Хĕрĕ каччине пĕрре те юратмастăп, тет.

МИКИТА. Мĕнле-ха апла? Урăх шухăш тытрĕ пуль-и?

ВАРВАРИ. Кам пĕлет. Ку каччăна вĕлерсен те каймастăп, тет.

МИКИТА. „Каймастăп" тет. Ак тата... епле каймасть пулать-ха!

ÇТАПАН. Апла кунта талпаса çапса ларни те ахалех.

ÇЕМЕН. Çаврăнать. Хĕрсем, вĕсем качча каяс умĕн пурте çавăн пек. Хĕр, вăл юланут çине утлансан та „каймастăп пуль-ха" тесе калать, тет те...

МАВРИ (х ы п ă н с а к ĕ р е т). Ах, турă! (Ç е м е н е а я к к а л л а ç а в ă т с а) Ивана тупаймарăм вĕт. Мĕн пулса тăчĕ-ха капла!

ÇЕМЕН. Кунтах терĕç вĕт! Килет пуль-ха.

МАВРИ. Çамрăксем çухалнă-ха пирĕн, ниçта та курăнмаççĕ.

МИКИТА. Епле çухалнă? Акă, Шăпчăк килет.

ШĂПЧĂК (к ĕ р е т, а в а н т у м п а). У-у! мĕн чухлĕ пуçтарăннă вĕсем кунта. Аван çўреççĕ-и! (Ç е м е н п е Ç т а п а н а а л ă т ы т а т ь).

МИКИТА. Ну, Шăпчăк хĕрĕм, пире кунта аннў пĕтĕмпех хуйха кўртрĕ-ўкерчĕ. Ман хĕр каччине пĕрре те юратмасть, тет. Юратсах каятăн пуль?

ШĂПЧĂК. Юратсах!

МИКИТА. Çавăн пек танкиста та юратмасан...

ÇЕМЕН. Танкист мар, тракторист!

ÇТАПАН. Тракторист мар пуль, танкист пуль?

ÇЕМЕН. Халь çапла калаççĕ пулинех, пĕлтĕрсенче тракторист тетчĕç те...

МИКИТА. Пĕлтĕрсенче тракторист пулнă вăл, халь танкист.

ÇЕМЕН. Ну, тăхлачă, çăкрисене майласа хур та... пĕрер курка сăра тытар!

МИКИТА. Каччи киличчен кĕтĕр ĕнтĕ. Акă сăмах çинех... (С м е л о в п а С л о н о в к ĕ р е ç ç ĕ. С л о н о в в а с к а с а Ш ă п ч ă к п а т н е п ы р а т ь).

СЛОНОВ. Çак ордер çине алă пус-ха, унсăрăн тĕррине парса ямаççĕ. Хăвăртрах, кăç пулать!

ШĂПЧĂК. Аван тĕрленĕ-и? (А л ă п у с а т ь).

СЛОНОВ. Калама çук аван. Тавтапуç сана, Шăпчăк, тавтапуç! (А л ă т ы т а т ь). Ну сывă пулса тăрăр! (К а й м а т ă р а т ь.)

(Смеловпа Шăпчăк каяççĕ.)

ÇЕМЕН. (С ĕ т е л х у ш ш и н ч е.) Иван, ăçталла тата?

СЛОНОВ (ç а в ă р ă н с а). Атте, эсĕ мĕн тума килнĕ кунта?

ÇЕМЕН. Епле мĕн тума? Хĕр çураçма.

СЛОНОВ. Кам валли?

ÇЕМЕН. Сан валли?

МИКИТА. Чим-ха... чим, чим... Кам пулатăн вара эс?

ÇЕМЕН. Çемен Ваçильчă!

МИКИТА. Хăш ялсем?

ÇЕМЕН. Иккассисем.

МИКИТА. Кама авлантарма килнĕ эс?

ÇЕМЕН. Хамăн ывăлăма, Йăвана.

МИКИТА. (Ç т а п а н а). Эсĕ кама авлантарма килнĕ апла?

ÇТАПАН. Хветĕре, Смелова.

МИКИТА. (М а в р и н е). Эсĕ кама тупса паратăн ман хĕре?

МАВРИ. Ивана.

МИКИТА. (В а р в а р и н е). Эсĕ кама паратăн хĕре?

ВАРВАРИ. Хам та пĕлместĕп ĕнтĕ, такама?

МИКИТА. Никам та ниçта та, тупса пама кирлĕ мар. Кама савать, çавна каять. Шăпчăк, хĕрĕм (Ш ă п ч ă к к ĕ р е т), кама саватăн, суйла!

ШĂПЧĂК. Мĕнле кама, Хветĕре! (К а я т ь.)

МИКИТА. Эсĕ леш Çеменĕ пуль-ха? Апла пулсан халех тухăр сĕтел хушшинчен!

ÇЕМЕН. Мĕнле тухăр! Эсир хăвăр каласа янипе килнĕ çынсем. Маври улталамарĕ пуль пире?

МИКИТА. Никам та чĕнмен сире.

ÇЕМЕН. Итле-ха, хăта, эсĕ ăнланмарăн пулас?..

МИКИТА. Ăнланнă, ĕлĕкех ăнланнă! Тек сире пуççапас çук-ха!

ÇЕМЕН. Кун пек ухмаха ернĕ çынна нихçан та курман.

МИКИТА. Эп ухмах-и?!

ÇЕМЕН. Ăслă çын çавăн пек хăтланмасть ĕнтĕ. (К а я т ь.)

МИКИТА. Ан калаçса тăр, яра-пар!

СЛОНОВ. Ха-ха-ха! Ахальрен çынна ан кўрентер, Никита Петрович. Ку, пуян Çеменĕ мар. Пуян Çеменĕ вăл тахçанах вилнĕ.

МИКИТА. Ку кам тавраш вара?

СЛОНОВ. Ку Караç Ваççи Çеменĕ. Манăн атте. Леш Мăн Петĕр шăлнĕ.

МИКИТА. Мăн Петĕр шăлнĕ?

СЛОНОВ. Çавă, ара.

МИКИТА. Чăнах-и?

СЛОНОВ. Чăнах!

МИКИТА. Чим-ха, чим, чим... Апла пулсан çаврăрас, каялла çаврăрас. Çемен Ваçильчă!.. Таврăн!.. Çук, илтмест. Карчăк, чуп-ха хăвăртрах, çаврăрса кил! (В а р в а р и к а я т ь). Мĕн туса хутăм-ха, ухмах! (Ç е м е н к ĕ р е т. Ç е м е н е:) Каçар, тархасшăн, каçар! Кўрентертĕм сире. Пĕлмесĕр пулчĕ. Ваттисем калашле „Утне çитмен туртине" тенĕ пек пулчĕ. (С л о н о в к у л с а я р а т ь.)

ÇЕМЕН. (М а в р и н е). Эсĕ мĕн ман пуçа пăтратса çўретĕн, а! Мĕнле намăс кăтартрăн эс мана, а! Ах, катемпи.. „Хĕрĕпе каччи уйăрмалла марах юратаççĕ. Пĕтĕмпех калаçса таталнă, хĕрĕ каччи валли тĕрлĕрен кĕпесем те хатĕрлесе хунă" Аçта санăн калаçса татални, а! Ах, йытă пичĕ. Питне тăла варри çакрăн-им мĕн?

МАВРИ. Эп... эп... эпĕ... пĕлмен... эп юратаççĕ пуль терĕм.. Тупса панăшăн хăй çĕр тенкĕ пама пулчĕ те... Тупса парас терĕм.

МИКИТА. Мĕн чухлĕ çынна макăртнă пуль эсĕ, çĕлен! Мĕн чухлĕ хĕрарăм патак çинĕ пулĕ сана пулă!.. Сана, намăса çухатнă çынна, çынсен пурнăçне хутшăннăшăн суда парас пулать! Сире те юмăç карчăккисемпе пĕр картах лартас пулать, шуйттансене!..

ÇЕМЕН. Мĕнле намăс куртăмăр!

МИКИТА. Сана мар намăс... ак кама намăс! Пĕр кĕпе тăхăнасшăн çыннăн чунне сутма хатĕр. Тьфу! Йĕрĕнчĕк. (П а у з а.) Тата витмест-и? Ну,

мӗн туса тӑратӑн? Марш!

МАВРИ. Хосподи, каҫарсамӑрах. Кун пек пуласса шухӑшламан. Урӑх нихӑҫан та, никама та тупса парас ҫук. Намӑс куртӑм ӗнтӗ. Ан хӑвалӑрах!

МИКИТА. Тупӑннӑ епле. (Варварине) Эсӗ вӗт, евӗчсӗр ӗҫ тухмасть тесе, ҫавна ертекенни... Ӗлӗкхи пек тӑвасшӑн...

МАВРИ. Ӗлӗкхисем иртрӗҫ пуль ӗнтӗ. Хайсемех мӑшӑрланаҫҫӗ.

ҪЕМЕН. Ну пулса иртнӗшӗн каҫарӑр. Сывӑ пулса тӑрӑр. Каяс.

МИКИТА. Ӑҫта?

ҪЕМЕН. Килелле.

МИКИТА. Ҫук, апла юрамасть, атя лар, лар, ниҫта та ямастӑп! (Лартать.)

ҪЕМЕН. Капла хӑна пулсах каяс пулать-и?

МИКИТА. Ара, тӗлне лекнӗскер... Маври, кил эс те лар, хӑна пул!

СМЕЛОВ. (Смелов, Слонов, Шӑпчӑк кӗреҫҫӗ.) Анчах урӑх нихҫан та никама та ан мӑшӑрлантар. Иван, атя, киль, лар!

СЛОНОВ. Ларас, ларас... Пирӗн яла хӑҫан?

СМЕЛОВ. Кунта ӗҫ пӗтеретпӗр те—сирӗн яла.

СЛОНОВ. Телефонпа, хамӑр машинӑпа килме калам-ха.

СМЕЛОВ. Эс ҫуранах-им?

СЛОНОВ. Велосипедпа.

ШӐПЧӐК. Пирӗн колхозӑн машин ҫук-им?

СЛОНОВ. Ну, сирӗннипе кайӑпӑр еппин.

МИКИТА. Ну, Смелов, Амӑшӗ ӑҫта ҫав тата?

ВАРВАРИ. Кунтах та-ха...

МИКИТА. Хӑти, килӗр, ларӑр сӗтел хушшине. (Лараҫҫӗ.) Эпир нимӗн чӑрмавсӑрах тӑвӑпӑр.

ВАРВАРИ. Кӑшт йӑлине тумалаччӗ те...

ҪТАПАН. Кирлӗ мар... хамӑрла...

МИКИТА. У-ух, хӗрсем килеҫҫӗ... Килӗрех.

(Хӗрсем, каччӑсем кӗреҫҫӗ.)

УРИНЕ. Иван Семенчӑ. Эпир сана кӗтсе ывӑнтӑмӑр. Ордерне ал пустартӑн-и?

СЛОНОВ. Пустарнӑ та-ха...

УРИНЕ. Ме, акӑ, тӗррӳне. Ордерне илсе пыма хушрӗҫ.

СЛОНОВ. Ме ордерне! (Парать.)

ШӐПЧӐК. Ну, хӗрсем... ларӑр вырнаҫса!.. Ачасем, ларсамӑр! Кудряшов лар!

ХВЕТУҪ. Мӗн пулнӑ сана, Шӑпчӑк? Питӗ савӑнӑҫлӑ эс.

ШӐПЧӐК (хӑлхаран). Качча тухатӑп. (Сӗтел патне каять.)

ХВЕТУҪ. Ну-у, (хуллен) хӗрсем! Вӗрҫӗнӗ хыпар: Шӑпчӑк качча тухать вӗт!

ХӖРСЕМ Ну-у!... (Кулаҫҫӗ.) Айтӑр чечек лсе килетпӗр! (Уринепе пӗр хӗр каяҫҫӗ.)

МИКИТА. Яшкӗрӗмсем, шӑпланӑр-ха.( Сӑра курки алла тытса.) Эпӗ акӑ мӗн калас тетӗп. Хальхи савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ куҫ умӗнчине кура, ӗлӗкхи асаплӑ пурнӑҫ тӗлӗкри пек куҫ умне килсе тӑрать. Ӗлӗк пирӗн ялта Ӑртиван Мӗтри пурччӗ... Хӑрах куҫлӑччӗ. Ӑшшӗ-амӑшӗ ҫул ҫитсен ҫавна авлантарма шут тытнӑ. Хайсем чухӑн пулнӑ. Чалӑш пӳртпе хӑмаран ҫапса тунӑ ҫенӗкрен урӑх нимӗн те пулман. Ну, тытӑнаҫҫӗ хайхи ҫак Маври пек евӗчсем Мӗтрие авлантарма. Мӗтрие хӑтана илсе каяс—никам та хӗр парас ҫук. Ун вырӑнне Сар Платуна илсе каяҫҫӗ вара. Ҫитеҫҫӗ хӗр патне. Апла та капла... Хӗрӗ курать. „каччи" аван, хитре, „каяс" тет. Лартаҫҫӗ те килеҫҫӗ. Киле ҫитсенех хӗре амбара хупса лартаҫҫӗ, пускиле. Виҫӗ талӑк амбарта усраҫҫӗ. Каҫсерен упӑшкапа ҫӗр каҫаҫҫӗ. Хӑй упӑшкине куҫпа та курман-ха. Кайран амбартан кӑлараҫҫӗ те пулас упӑшкине тин курать. „Кӑна валли тесе мар вӗт илсе килтӗр мана... Юратмастӑп кун пекскерне... Мӗнле пурнас ку пурнӑҫпа!.." тесе йӑваланса йӗрет. Унталла та, кунталла та чупкалать,—никам та хӗрхенекен ҫук. Пӑхать, йӗритавра ют ҫын. Лере, хӗрӗн амӑшӗ ама-ҫурри пулнӑ иккен. Тем пулсан та каймалла, кӳртместӗп, тесе каланӑ, тет. Акӑ сана ӗлӗкхи мыскара. Унтан шутласан халӗ мӗнле пурӑнатпӑр! Халь пур енчен те ирӗк! Кама юратан, ҫавна кай! Кама юратан ҫавна ил! Телей ҫитрӗ, пире валли те, эпир те ирӗклӗ пурӑнса куртӑмӑр. Сире, пулас мӑшӑрсене тата аванрах, тата савӑнӑҫлӑрах, тата телейлӗрех пурӑнӑҫ сунатӑп! Ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн! (Ӗҫеҫҫӗ.)

ПУРТЕ. Маттур, Микита мучи! Тав тӑватпӑр ҫамрӑк мӑшӑрсене!

УРИНЕ (кӗрет). Сире, тӗрӗ тӗрлекен артель хӗрӗсенчен, хаваслӑ, тулӑх пурнӑҫ сунатпӑр! (Чечек парать. Шав.).

МИКИТА (алӑ тытать). Аван килӗштерсе пурӑнӑр! Чӑн та пӗр-пӗрне килӗштеретӗр пулсан, тӑрӑр та аҫу-аннӳ умӗнче чуптӑвӑр!

ШӐПЧӐК. Хаваслансах. (Смеловпа чуптӑваҫҫӗ.)

МИКИТА. Ну, вот, пулчӗ те. Амӗш, санӑн тата мӗн те пулин каламалли пур-и?

ВАРВАРИ. Эпӗ те ҫавнах каласшӑнчӗ... Чуптӑварах (лешсем чуптӑваҫҫӗ).

ШӐПЧӐК.
Тавтапуҫ сана, атте,
Хветӗре панӑшӑн!
Тавтапуҫ сана, анне,
Ҫуратса ӳстернӗшӗн!

СМЕЛОВ.
Тавтапуҫ иксӗре те
Хӗрӗре ӳстернӗшӗн,
Тавтапуҫ иксӗре те
Хӗрӗре пилленӗшӗн.

Эпӗ сирӗн хӗрӗре трактористкӑна, хамӑн арӑм турӑм. 2—3 ҫул каярах эпир унпа тракторпа кӗрлеттеретӗмӗр, халӗ лере ҫитсенех танкӑ ӗҫне вӗрентетӗп тесе сӑмах паратӑп. Партипе правительство хушсанах, эпир танк ҫине ларса тӑшмана ҫапса аркатӑпӑр!

СЛОНОВ (сӑра курки тытса). Юлташсем! Эпӗ пӗр ҫур сехетлӗх сӑмах илсе, ҫамрӑк мӑшӑрсене хисеплесе тост калас тетӗп.

ПУРТЕ. Кала, кала!..

СЛОНОВ. Эсир, танкистсем, тӑшман чикӗ урлӑ сӑмсине кӑтартсанах, Хасан кӳлли патӗнчи пек, ҫапса ҫӗмӗрессе шанатпӑр. Эсир унта танкӑпа хатӗр тӑрӑр. Эпир кунта, пулас танкистсем, тракторсемпе хатӗр тӑрар. Сывӑ пултӑр Красная Армия! Сывӑ пултӑр Хасан кӳлли ҫапӑҫӑвӗнчи Смелов пек паттӑрсем! (Савӑнӑҫла шав.)

МИКИТА. Ну, яшкӗрӗмсем! Эпир халь нихҫан пулман туй пуҫласа ярӑпӑр. Ӗҫсе ӳсӗрӗлсе мар, ялпа ял, урампа урам ҫапӑҫса мар, хулари вечер

пек. Музыкăпа! Ну-ка, янтратса ярăр-ха, пĕрре! Эпир туй тунине пурте илтчĕр. (Музыка пуçланать.) Ну-ка, туй пуçлăхĕ вырăнне пуçласа пар-ха пире ватти! (Кудряшов купăс калать.)

ÇТАПАН. Е-е! мĕн пулать, мĕн килет. Çамрăксен кăмăлне тăвасах пулать. (Музыка ташă кĕвви калать. Çтапан сăвă каласа ташлать.)

Пурăннă эпир авал
Йӳç куççулĕ юхтарса.
Тухрăмăр халь мухтава
Пурăнатпăр савăнса.

Ну-ка, çамрăк мăшăрсем! (Шăпчăкпа Хвеаççĕ те ташлаççĕ.)

ХĔРСЕМ (юрлаççĕ):

Шăпчăк кайăк пĕчĕк кайăк,
Темчул пĕчĕк ай пулсан та
Колхоз садне, ай, янтратать.

Шăпчăк тантăш, манми тантăш
Темчул пĕчĕк ай пулсан та
Ашшĕ садне янтратать.

Хĕрсемпе каччăсем: (карталанса юрлаççĕ)

Ма ĕçес мар сăрине
Кăпăкланса тăнă чух,
Ма юрлас мар юррине
Шăпчăк качча кайнă чух!

Ăш сăрине ĕçнĕ чух
Ма калас мар сăввине,
Чаплă туя тунă чух
Ма ташлас мар ташшине!

(Ташă кĕвви. Пурте ташлаççĕ.)

ЧАРШАВ.

# Пирĕн çĕршыв хĕрĕсем

Чирков ӳкерчĕкĕ.



**— Мĕскер ку хĕр, ир ине кăна лашапа ĕрĕхтерсе çӳретчĕ, халь тата шывра выляса çӳрет?**

**— Ан кансĕрле-ха, ун чухне вăл лашапа норма панă, халь гранатăпа шывра ишсе парать.**

# Каласа парăр!!!

Тӳрех калатăп, эпĕ таçта та çитрĕм ĕçтĕ. Такамран та ыйтрăм. Анчах ĕç тухмарĕ. Каламаллине никам та каласа параймарĕ. Юлашкинчен вара, ырă тусăм, сан пата, мĕн пулать те мĕн килет тесе, çыру ямашкăн шут тытрăм. Пулăшсам эсĕ те пулин, „Капкăн“ тусăм!

Ыйту акă мĕн пирки тухса кайрĕ. Кăçал, пупсен питравĕ умĕн тĕне хирĕç доклад тума хатĕрленеттĕм. Библиотекăна карăм та:

—Акă сана валли пĕр лайăх кĕнеке,—терĕ библиотекарьша. Вара мана «Карл Маркс о религии» ятлă кĕнекине пачĕ. Ăна кăçал Чăвашгиз вырăсла чĕлхерен чăвашла куçарса кăларнă.

Малтан „умсăмахне“ вуларăм. Çак кĕнекен «умсăмахĕнче» «редакци» ячĕпе (тĕрĕссипе каласан, куçараканпа редактор ячĕпе) çакăн пек çырнă:

„Ăнланма йывăртарах сăмахсене, терминсене парткабинетра ĕçлекенсенчен, учительсенчен т. ыт. ыйтса пĕлес пулать... Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсен словарĕпе тата ытти словарьсемпе те усă курма сĕнетпĕр».

Кĕнекинче вара, «ăнланма йывăртарах» сăмахсем кăна мар, халиччен никам илтмен-курман сăмахсем те темĕн чухлех. Тĕслĕхрен, çак сăмахсенех илсе кăтартам:

Духовнăй шăрш.
Ӳте вĕлерӳ.
Хупăнса лару.
Хайне йăпату.
Ырăкăтарту.
Луччĕ.
Мука.
Тӳнтерле тĕнче.
Отраженилекен.
Отраженилемелли.
Тата ыт. те.

Куçаракансен çак «çĕнĕ» сăмахĕсене ăнланман пирки, парткабинетра ĕçлекенсенчен ыйтрăм. Вĕсем:

—Эпир ку вăхăта çитсе те халăх хушшинче ун пек сăмахсене илтмен,—терĕç.

Учительсем пурте пĕр ответ пачĕç.

—Сăмахсене çапла мăкăлтаса çырни чĕлхен нимĕнмĕнле законĕпе те килĕшсе тăмасть,—терĕç.

Юлашкинчен, аптăраса çитнĕ пирки, тĕрлĕ-тĕрлĕ словарьсенче шырама пуçларăм. Нимĕнле словарь çинче те «ӳте вĕлерӳ», «луччĕ,» «отраженилемелли» евĕрлĕ сăмахсем çук. Те пирĕн словарьсем чухăн, те пирĕн переводчиксем ытла та ăслă,—пĕлме çук, пĕлместĕп, „Капкăн“ юлташăм!

# Ача туймасть

„Красное Сормово“ колхозри (Сĕнтĕр районĕ) колхозник М. Анисимов пĕррехинче колхозниксен пуххине каясран тĕпсакайне кĕрсе пытаннă.

*(Колхоз çумĕнче тухса тăракан „Çĕнĕ пурнăç“ хаçатран)*

**Чирков ӳкерчĕкĕ**



**Пуху хăвалакан: Михала пичче килте-и?**
**Михала арăмĕ: Çу-у-ук...**
**Михала ачи: Пийĕн атте тĕпшакайĕнче лаять вăй...**

---

Хăвах шутла-ха, переводчиксем ухмах çынсем пулсан, вĕсем çакăн пек япаласене ăçтан шутласа кăларччăр:

«Христианла социализм аристократ çиллине пуп пĕрĕхекен таса шыв пулса тăрать» (21 стр.).

Е тата:

«...Тĕнре отраженилекен юлашки тулашри вăй тата унпа пĕрле тĕнлĕ отражение хăй те пĕтсе ларĕ, мĕншĕн тесессĕн вара нимĕне те отраженилемелли пулмасть» (39 стр.).

Çаксене вуланă хыççăн, пирĕн ялти Саккул «философăн» та кӳçĕ-пуçĕ вирелле тăрса кайрĕ. Вăл вара, манпа килĕшсе, çапла каларĕ:

—Çыр «Капкăна»! Унтан консультаци парĕç... Тен вĕсем,—терĕ вăл юлашкинчен,—пирĕн пата çав кĕнекене куçаракан çыннех командировкăна ярĕç. Куçарнăшăн вăл командировкăна килмелĕх укçа илнĕ пулĕ...

**Танькка Павăлĕн ывăлин ывăлĕ.**

Шуркасси, Çĕмĕрле р.

---

**Секретарь и вып. редактор И. Илларионов.** **Зам. отв. редакт. В. Я. ЯКОВЛЕВ.**
Сдано в производство 10/IX-39 г. Подписано к печати 13/XI-39 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1805. Заказ № 534.
Формат бум. 58×84¹/₈. Об'ем 2 п. л. Тираж 4950 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ“, г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР

ХАКЁ 20 ПУС.




Хавасла ĕçленисен савăнăçĕ.